Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

82 (8246) № * Юн кун, 2014 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 22-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Чрезвычайлă лару-тăру

## Инкек вăйсене пĕрлештерет





Юпа уйăхĕн варринчи çумăрсем иртнĕ эрне кунхи пăрлă çумăрпа вĕçленчĕç. Ку инкек вара Чăваш Республикипех чрезвычайлă лару-тăру кăларса тăратрĕ. Пăрлă çумăр кӳнĕ инкекĕн калăпăшĕ уйрăмах пирĕн районта пысăккине палăртрĕç. Муркаш енри 16 ял тăрăхĕнче электропередача линийĕсем сиенленнĕ, нумай çĕрте вĕсем хулăн пăрпа витĕннине чăтаймасăр, тепĕр вырăнсенче пăрлă çумăр йывăрăшĕпе хуçăлса аннă йывăçсене пула таталнă. Çапла вара юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнчен 18-мĕш каçхине районти 177 ялтан 175-шĕ çутăсăр, ăшăсăр тата шыхăнусăр тăрса юлчĕ. Районти пур ял тăрăхĕнче те чрезвычайлă лару-тăру сиксе тухрĕ.

Кĕтмен лару-тăрăва район администрацийĕ пĕрремĕш сехетренех алла илчĕ. Чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарас тата пĕтерес, пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес енĕпе йĕркеленĕ районти комисси юпа уйăхĕн 18-мĕшĕнче 8 сехетре район территорийĕнче чрезвычайлă лару-тăру пуçланнине тата хамăр енри пур вăя та çут çанталăк кăларса тăратнă инкекпе кĕрешме чĕнсе пĕлтерчĕ. Районти электролинисем çинче пысăк калăпăшлă юсав ĕçĕсем пуçланчĕç. Вĕсене йĕркелесе пыма район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ертсе пынипе йĕркеленĕ оперативлă штаб йĕркелерĕç. Ыйтусене вăхăтра татса парассипе вăл тăтăш ĕçлесе пырать.

– Пулса тухни эпир инкексене сирме хатĕр пулнине уççăн тĕрĕслет. Паян пирĕн чи малтанах социаллă сфера объекчĕсене – шкулсене, ача сачĕсене, больницăсене, ватсисен çурчĕсене, фельдшерпа акушер пункчĕсене, культура çурчĕсене, шывпа тивĕçтерекен объектсене – электричество çути çитермелле. Çавăн пекех пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ертӳçисемпе специалисчĕсен обществăлла выльăхчĕрлĕх фермисене электричествăпа тивĕçтерессипе кая юлмасăр тивĕçлĕ йышăнусем тумалла. Йывăрлăхсем умĕнче пуртре пĕрле пулсан çеç вĕсене сирме пире çăмăлрах пулĕ, – терĕ Муркаш енре чрезвычайлă лару-тăру туса хуни çинчен юпа уйăхĕн 18-мĕшĕнче пĕлтернĕ май район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев. Çак кунран пуçласа ял тăрăхĕсен администрацийĕсем ялсенче ӳкнĕ йывăçсене иртессипе пысăк ĕçсем туса иттерчĕç. Пĕрремĕш каçах çулйĕр службин автоçулсене тасатассипе ăнăçлă ĕçленине палăртмалла. Çакна та каламалла, чрезвычайлă лару-тăру кунĕсенче шалти ĕçсен пайĕпе çар комиссариачĕ хушма вăйсем мобилизацилеме пултарчĕç. Районта пурăнакансем пулса тухнă лару-тăрăва тĕрĕс хак панине çак вăхăтра урăх йышши инкек-синкек пулманни те çирĕплетет.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

Çырăнтару – 2015

## Эсир хаçат çырăннă-и?



**Хаклă вулаканăм! "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçата 2015 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтарăççĕ. Апла пулсан почтальонсемпе тĕл пулма васкăр. "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 347 тенкĕ те 28 пус.**

**"Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçата çитес çулхи 6 уйăх валли çырăнакансене стена çине çакмалли 2015 çулхи тĕслĕ календарь парнелетпĕр.**

## Республикăра – чрезвычайлă лару-тăру

Юпа уйăхĕн 19-мĕшĕнче ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе Чрезвычайлă лару-тăру енĕпе йĕркеленĕ комиссин тата оперативлă штабăн пĕрлехи ларăвне иртнĕ, унта авари сиенне пĕтерес тата юсав енĕпе йĕркеленĕ мĕн пур служба представителĕсене явăçтарнă. Видеоконференци мелĕпе йĕркеленĕ канашлăва çавăн пекех республикăри районсемпе хуласен пуçлăхĕсем те хутшăннă.

Канашлура республика территорийĕнче патшалăхăн чрезвычайлă лару-тăрăва сирсе ярас енĕпе йĕркеленĕ пĕрлехи тытăмĕн Чăваш Енри управленийĕн органĕсемшĕн регион шайĕнчи чрезвычайлă лару-тăру режимне ĕçе кĕртни çинчен пĕлтернĕ.

## Проектăн малашлăхĕ пур

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Раççей перекет банкĕ» АУО вице-президенчĕпе, «Универсаллă электрон карта» АУО федерации уполномоченнăй организацийĕн президенчĕпе Алексей Поповпа тĕл пулнă. Ĕçлĕ калаçăва республикăри Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин, ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем хутшăннă.

Тĕл пулура «Раççей перекет банкĕ» АУО Чăваш Енре процессингпа биллингăн пĕрлехи центрне тума сĕннине тишкернĕ. Унта пурăнмалли çурт-йĕр управленийĕн тӳлевĕсене шута илмелли тата ресурссемпе тивĕçтерекен организацисемпе коммуналлă пулăшусемшĕн татăлмалли расчетсен даннăйĕсен пĕрлехи бази пулĕ. Алексей Попов шухăшĕпе пĕрлехи даннăйсен базине тата пĕрлехи расчет тытăмне йĕркелени, управляющи компанисен тăкакĕсене оптимизацилени, расчетсен уççăнлăхĕ, укçа-тенкĕпе тĕллевсĕр усă курнине пĕтерни асăннă проектăн малашлăхĕ пуррине кĕске вăхăтрах кăтартса парĕ.

## Хаçатăн иртнĕ номерне ЛТЦ-ра калăпларăмăр

Иртнĕ эрне кун пăрлă çумăра пула Муркаш ялĕ кăнтăрла иртсен электричествăсăр юлчĕ.

Паллах, районти "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçат редакцийĕнче ĕçлекенсемшĕн ку кĕтменлĕх кăна мар, пысăк чăрмав та пулса тăчĕ. Шăмат кунхи номере пичете памалла, вăл графикпа килĕшӳллĕн вулакан патне çитмелле. Хаçата вара электричествăсăр тума çук. Шыракан ялан майне тупать тени тĕрĕсех-тăр. Район хаçачĕн сотрудникĕсем "Волгателеком" ОАО республикăри филиалĕн Кӳкеçри ЭТУС-ăн Муркашри ЛТЦ ĕçченĕсенчен пулăшу ыйтрĕç. Кунта дизель-генератор ĕçленĕрен çутă пуррине пĕлетпĕр-ха. Асăннă цех ĕçченĕсем пирĕн ыйтăва ăнланчĕç, хапăл тусах хаçат тума пӳлĕм уйăрса пачĕç. Çапла вара "Çĕнтерӳ ялавĕн" иртнĕ номерне эпир Муркашри линипе техника цехĕнче калăпласа кăлартăмăр.

Тăрăшни сая каймарĕ, черетлĕ номер вулакан патне вăхăтра çитрĕ. Муркашри линипе техника цехĕн ертӳçине Андрей Макарова, Семен Семенов инженер-электронщика, коллективри ытти ĕçченсене пире пулăшнăшăн тав сăмахĕ калатпăр, малашнехи ĕçре ăнăçу сунатпăр!

**Редакци ĕçченĕсем.**

ГКЧС асăрхаттарать

## Пулман сивĕсем килеççĕ

ЧР гидрометеорологипе тăван тавралăх мониторингĕн центрĕн сăнавĕпе юпа уйăхĕн 22 – 27-мĕшĕсенче Шупашкарта тата тĕллĕн-тĕллĕн республикăра çак тапхăршăн ку таранччен пулман сивĕсем тăма пултараççĕ. Сывлăшăн вăтам температури нумай çулхи вăтам климат температуринчен (1 – 3 градус ăшă) 7 градус сивĕрех пулма пултарать (4 – 6 градус сивĕ).

Çут çанталăк условийĕсенче кура электричество тата çыхăну линийĕсем таталас, техникăна ĕçлеме чăрмавсем пулас хăрушлăх пур.

Саламлатпăр



Юратнă аннене, хисеплĕ хунямана, кăмăллă кукамая – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Юлия Андреевна ВАЗИКОВĂНА** 75 çул тултарнă ятпа хĕрӳллĕн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăйхал, иксĕлми телей сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем çитсе пычăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана тата нумай-нумай çул усратăр.

**Пысăк салампа: хĕрĕ, кĕрӳшĕ, тăхлачи, мăнукĕсем.**

Шуркасси ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă **Зинаида Григорьевнăпа Леонид Петрович ШУРНОВСЕНЕ** пĕрлешнĕренне 60 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Тавах сире эсир пурришĕн, çемье ăшши пулнишĕн. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми вăй-хал, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр, чир-чĕр сирĕнтен пăрăнса иртĕр. Пире савăнтарса пурăнма Турри вăй-хăват патăр сире.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕ, 4 мăнукĕ, кĕçĕн мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Чрезвычайлă лару-тăру

# Инкек вăйсене пĕрлештерет

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)**

Оперативлă штаб ял тăрăхĕсенчи лару-тăру епле улшăнса пынине кунсерен тĕрĕслесех тăрать. Муркашсене çак вăхăтра Саратовпа Оренбургри, Кировпа Чул хулари, Самара, Мордва Республикинчи, Пензăпа Саранскри, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарти тата хамăр республикăри Тăвайпа Канаш районĕсенчи юсав бригадисем пулăшаççĕ. Вĕсен аллинче 27 тĕрлĕ техника, 3 автовышка. Аякран килнĕ юсав бригадисене "Сывлăх" ФСКра вырнаçтарчĕç, вĕсене ăшăпа тата вĕри апатпа туллин тивĕçтереççĕ. Ял тăрăхĕсенчи бригадăсем те çийĕнчех ĕçе кӳлĕнчĕç. Вĕсем пăрлă çумăр йывăрăшĕпе хуçăлса аннă йывăççенчен çулсене, урамсене тасатрĕç, юсав бригадисем валли çул уçрĕç. "Моргаушское" ЖКХ 3 бригада (14 çын) йĕркелеме пултарни те вырăнлă пулчĕ.

Ĕç калăпăшĕ пысăк пулнине çакă та çирĕплетет. Октябрĕн 18-мĕшĕ тĕлне районта электричество линийĕн юписем 26 ӳкнĕ пулсан, октябрĕн 20-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле вĕсем 63-не çитрĕç. Юсавçăсем çак вăхăтра 32-шне çĕнĕрен лартма пултарчĕç.

Эсир паянхи сăн ӳкерчĕксенче Самара облаçĕнчи Чапаевск хулинчи производство пĕрлешĕвĕнчен килсе çитнĕ юсавçăсене Çатракассинчи вăтам шкула каякан пысăк вольтлă электролиние (икĕ юпа ӳкнĕ) юсанă çĕрте куратăр. Вĕсем **(пĕрремĕш страницăри сăн ӳкерчĕкре)**: М. Шевяхов, Д. Мульнючкин, К. Пронин, А. Бурцев, И. Каюров, А. Нырков.

– Ĕçĕ нумай. Икĕ кун хушшинче 2-мĕш электролиние юсатпăр. Лару-тăрăва пĕтĕмĕшле йĕркене кĕртмесĕр эпир кунтан каймăпăр, – терĕ М. Шевяхов хăйсем кăнтăр кунĕн кашни минучĕпе туллин усă курма тăрăшнине палăртса.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче вара дизель-генераторсем ĕçлеттернипе фермăсене электричество çути пырать. Малтанхи кунсенче чылай çĕрте стационарлă тата кĕсье телефонĕсем ĕçлеменни те юлашки кунсенче йĕркене кĕрет. Шыв пулман ялсене шыв та çитет. Вăхăтлăх каникула кайнă шкул ачисем те вĕренме çӳреме пуçлаççĕ. Ача сачĕсем те алăкĕсене уçаççĕ.

Районта юсав ĕçĕсем малалла пыраççĕ.

**А. БЕЛОВ.**




# Пурте пĕрле тăрăшрĕç

Октябрĕн 17-мĕшĕнче çумăр çунă вăхăтра çанталăк сивĕ тăнă пирки йывăççен турачĕсем хулăн пăрпа хупланчĕç. Чылай çĕрте туратсем хуçăла-хуçăла ӳкрĕç. Пирĕн Хурăнкасси ялĕнче йывăççем хуçăлнине пула электричество пралукĕсем 500 метр ытла татăлса çĕре ӳкрĕç. Нумайăшĕн пурăнмалли çурчĕсене кĕрекен пралуксем татăлса пĕтрĕç.

Тепĕр кунне Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Кузьмин кашни яла çитсе килчĕ, çынсене электролинисем çывăхĕнчи ӳкнĕ йывăççемпе туратсене касса тирпейлеме, электролинисене йĕркене кĕртекен электриксене пулăшма ыйтрĕ.

Мĕн тăвăн, паянхи вăхăтра электричествăсăр пĕр кун пурăнасси те тем тăрать. Çавна çынсем лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа та пурте тенĕ пекех вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшрĕç.

Электриксене çăмăлах пулмарĕ. Вуншар юпа çине улăхса пралуксене карма, сыпăнтарма тиврĕ. Юписем вара пăрланса ларнă. Ялти 15 ытла çын йывăççем каснă, пралуксем карнă çĕрте тимлерĕ. Çапла вара çав кунах ялта электролини хута кайрĕ. Уншăн электриксене те, ял çыннисене те тав сăмахĕ калатăп.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**

Хурăнкасси ялĕ.

# Пĕтĕмпех çынсен çăмăллăхĕшĕн

Порталта регистрациленес тесен

Хальхи вăхăтра Чăваш Енре пурăнакансем патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче регистрациленес тесен хăйсем кам пулнине республикăри мĕн пур нумай функциллĕ центрсенче тата ĕçпе тивĕçтерекен центрсенче çирĕплетме пултараççĕ. Çак кунсенче регионта асăннă учрежденисенче ансат мелпе электрон мелĕпе алă пуснисене çирĕплетес енĕпе ĕçлекен центрсем уçас ĕç вĕçленчĕ.

МФЦ-ра е социаллă хӳтлĕх пайĕнче харпăр хăй кам пулнине регистрацилес тесен граждансем харпăр хăйсен персоналлă даннăйĕсен кабинетĕнче ансат майпа регистрациленни кирлĕ. Çакă вăл пĕрлехи порталта вырнаçтарнă пур услугăпа та туллин усă курас пулсан кирлĕ пулать. Сăмахран, çын хăй кам пулнине çирĕплетмесĕр паспорт илме е пурăнакан вырăнта регистрациленме заявлени пама пултараймасть.

Патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче харпăр хăйĕн учет даннăйĕсене çирĕплетмелли хушма пунктсем йĕркелени республикăн инçетри районĕсенче тата пĕчĕк ялсенче пурăнакансемшĕн патшалăх услугисене ансат мелпе тата туллин илессипе самай çăмăллăх кӳрет.

Аса илтеретпĕр. 2014 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче ансат майпа регистрациленме май туса пачĕç. Çапла вара кĕсье телефонĕн номерĕпе е электрон почтин адресĕпе усă курсах порталта харпăр хăй кабинетне йĕркелеме май пур. Анчах та кун пек учет çыравĕпе кăна усă курнă чухне порталти мĕн пур услугăпа усă курма май çук. Патшалăхăн тата муниципалитетăн ытти услугипе те туллин усă курас тесен харпăр хăйĕн кабинетĕнче гражданинăн харпăр хăйĕн ытти даннăйĕ пирки те информаци кĕртмелле: хушамат, ячĕ, ашшĕ ячĕ, хăçан çуралнин дати, паспорт даннăйĕсем, СНИЛС. Патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнчи пур услугăпа та туллин усă курас тесен заявителĕн пур даннăйне те кăтартас пулать. Çакна эпир сĕнекен майсенчен пĕринпе усă курса туса ирттерме пулать: код номерне ыйтса Раççей Почти урлă заказлă çырупа ярса пама пулать (вăтамран икĕ эрнерен килет), чикĕллĕ яваплăхлă "Ростелеком" обществăн клиентсемпе ĕçлекен пĕр-пĕр центрне пымалла, универсал электрон карттăн (картридерпа усă курса) квалификациллĕ электрон ал çырăвĕпе усă курма пулать.

Халĕ вара çав учет çыравне тивĕçтерекенсем шутне татах 51 центр хушăнчĕ (МФЦ-сенчи 27 пункт тата çынсене ĕçпе тивĕçтерекен центрсенче 23 пункт, кунсăр пуçне 1 пункт Чăваш Ен Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствинче йĕркеленĕ. Хăвăрăн учет даннăйĕсене çирĕплетме пĕрле паспорт пулмалла.

Раççей Федерацийĕн Çыхăну тата массăллă коммуникцисен министерствин даннăйĕсем тăрăх Чăваш Енре патшалăх тата муниципалитет услугисен пĕрлехи порталĕнче регистрациленнисен шайĕ 6,54 процентпа танлашать. Пурте вĕсем электрон мелĕпе федераци услугисемпе кăна мар, регионăн тата муниципалитетăн 69 услугипе те усă курма пултараççĕ.Сăмахран, порталпа усă курса мăшăрланма заявлени пама, ачана пăхса пурăннăшăн пособи илсе тăрассине йĕркелеме, социаллă найм шучĕпе çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма учета тăма т. ыт. те пултаратăр.

Çынсене патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерессин пахалăхне ӳстерессин, вăл пуриншĕн те меллĕ пулма кирлин ыйтăвĕсене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пĕрре кăна мар çĕклерĕ. 2014 çулхи мартăн 20-мĕшĕнче Патшалăх Канашĕн черетлĕ сессийĕнче республикăн 2013 çулхи ĕçĕ-хĕлĕ пирки отчет туса панă май Михаил Игнатьев çавна палăртрĕ.Çынсене "пĕр чӳрече" мелĕпе нумай функциллĕ центрсенче услугăсемпе электрон мелĕпе тивĕçтернĕ май çакă çынсене тĕрлĕ инстанци тăрăх çӳресе тĕрлĕ справка пуçтарассинчен хăтарать, чиновниксемпе тĕл пулмасăрах ĕç тума май парать, коррупципе çыхăннă ĕçсем те самай сахалланĕç.

**Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви.**

***СĂМАХ МАЙ. Çак вăхăта Муркаш районĕнче патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче регистрациленнисен шучĕ 3519 çынна çитнĕ. Октябрĕн 13-мĕшĕнчен тытăнса 17-мĕшĕччен регистрациленнисен шучĕ 180 çынпа танлашать. Районта пурăнакансене пурне те активлăрах пулма, патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче регистрациленсе услугăсемпе электрон мелпе анлăрах усă курма сĕннĕ пулăттăмăр. Хăвăрăн вăхăта хаклама хăнăхăр!***

Росреестрта

# Материалсемпе паллашма май пур

Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕнче çĕр йĕркелĕвĕн ĕçĕсене туса ирттернĕ май илнĕ даннăйсен патшалăх фончĕ пур. Кăçал çулталăк пуçланнăранпа управленин патшалăх фончĕ çĕр йĕркелĕвĕн ĕçĕсемпе татах пуянланчĕ. Кусем вĕсем ялсем, ял тăрăхĕсем, санитарипе хӳтĕлев зонисем, шыв сыхлавĕн зонисемпе çыран хĕррисенчи хӳтĕлев тăрăхĕсем, çыхăну тата электропередача линийĕсен хӳтĕлев зонисем, культура несĕллĕхĕн объекчĕсем, çут çанталăкăн патшалăх заказникĕсем тата ытти çĕрсем ăçта вырнаçнине çырса кăтартнипе çыхăннă. Вĕсен чиккисене кадастр учетне илнĕ май ку объектсем юридици вăйĕнче шутланаççĕ. Тепĕр майлă каласан енчен те лаптăк мĕнле те пулин зонăна лекет пулсан, ун тĕлĕшпе чикĕлевсем пулаççĕ. Çакă вăл ку территорисемпе усă курассипе уйрăм условисем палăртнипе çыхăннă.

Республикипе илес пулсан управленин даннăйсен фондне 900 ытла даннăй кĕртнĕ. Чăваш Республикин çĕрĕсем çинче çĕр йĕркелĕвĕн ĕçĕсене ытларах туса ирттерекеннисен шутĕнче Канаш районĕнчи техника инвентаризацийĕн бюровĕ, "Земля" ООО, "Тавладстройинвест" ООО, "НПП "Меридиан" ООО, "НПП "Аршин" ООО. Управленин тĕп аппаратне кăна даннăйсен фондне асăннă организацисем 2014 çулхи январь – август уйăхĕсенче çĕр йĕркелĕвĕн 200 ытла ĕçне тăратнă.

Юлашки вăхăтра фонда Шупашкар, Муркаш, Етĕрне районĕсен тата Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар территорийĕсенче вырнаçнă Шупашкар шыв хранилищин шыв сыхлавĕн тата çыран хĕррисенчи хӳтĕлев тăрăхĕсен чиккисене палăртассипе çĕр йĕркелĕвĕн ĕçĕсем килчĕç. Çавăн пекех фонда Çĕрпӳпе Канаш тата Вăрнар районĕсен территорийĕсемпе юхса выртакан Кĕçĕн Çавал, Йĕпреçпе Канаш районĕсен территорийĕсемпе юхса выртакан Урюм, Канашпа Вăрмар тата Тăвай районĕсен территорийĕсемпе юхса выртакан Аль, Йĕпреçпе Комсомольски районĕсен территорийĕсемпе юхса выртакан Хома юхан шывсен шыв сыхлавĕн тата çыран хĕррисенчи хӳтĕлев тăрăхĕсен чиккисене палăртассипе çĕр йĕркелĕвĕн ĕçĕсене тăратнă.

Граждансемшĕн тата организацисемшĕн Куславкка районĕн территорийĕнчи "Аттиковский остепененный склон", "Ковыльная степь", "Карамышевский", "Правобережье реки Илеть", "Шомиковская колония серых цапель" (Шупашкар районĕ), "Цивильский сурковый" (Çĕрпӳ районĕ), "Бурундукский" (Красноармейски районĕ) патшалăх çут çанталăк заказникĕсем вырнаçнин чиккисене кăтартакан карттăсем (плансем) интереслĕ пулĕ тесе шутлатпăр.

Управленин даннăйсен фондĕнче халĕ çут çанталăк палăкĕсем – Красноармейски районĕнчи "Кошкинское" тата "Кӳлхĕрри" кӳлĕсем пирки материалсем пур. Çĕр йĕркелĕвĕн ĕçĕсене çут çанталăкăн палăкĕсенчен Етĕрне районĕнчи Сосновское кӳлĕпе ун тавра вырнаçнă вăрман тăрăхĕ, Патăрьел районĕнчи "Каенсар" кӳлĕ, Куславкка районĕнчи "Чарду тайлăм", Элĕк районĕнчи "Илгышевский" кӳлĕ тĕлĕшпе те патшалăх фондне управа çитерсе панă.

Çĕр йĕркелĕвĕн çак ĕçĕсемпе тата управленин даннăйсен фондĕнчи ытти материалпа кирек кам та паллашма пултарать. Кирлех пулсан материалсен копийĕсене те илме май пур. Даннăйсен фончĕн материалĕсене илес тесен харпăр хăйĕн управленин тĕп аппаратне пырса заявлени çырмалла. Адресĕ: Шупашкар хули, К. Маркс урамĕ, 56-мĕш çурт. Заявленисене çавăн пекех управленин çĕр йĕркелĕвĕн объекчĕ вырнаçнă районти пайĕсене те пама пулать.

**Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕн пресс-службИ.**

Спорт хыпарĕсем

# Канмалли кун – хĕрӳ ăмăртура

Нумаях пулмасть пирĕн районти спортпа туслă çамрăксемшĕн вăхăт хĕрӳ ăмăртусенче иртрĕ: Юнкăра арçын ачасем мини-футболла вылярĕç, Муркашри вăтам шкулта вĕренекенсем кӳршĕри Мари Эл Республикинчи çăмăл атлетика кросне хутшăнчĕç.

– 2002 çулта çуралнисем тата кĕçĕнреххисенчен тăракан футбол командисем Юнка пурĕ 8-ăн пухăнчĕç: Мăн Сĕнтĕр, Юнкă, Калайкасси, Ярапайкасси, Муркаш, Нискасси, Йӳçкасси тата Шетмĕпуçĕнчи шкул ачисем. Командăсем икĕ ушкăнра икĕ площадкăра вылярĕç, – пĕлтерет В. Михайлов тренер.

Çак турнирсем районти пĕрлештернĕ командăна пухма май панине калать вăл, лайăх вылякан ачасем пуррине палăртать. Вăйăсенче ачасем хĕрӳлĕх, çивĕчлĕх енчен хăйсене аван кăтартма пултарнă. Уйрăм вылякансене тĕрлĕ номинацире палăртнă. "Чи лайăх вратарь" пулма Александр Иванов (Шетмĕпуç шкулĕ) тивĕçнĕ, "Чи лайăх хӳтĕлекен" Артур Константинов (Калайкасси) пулнă, "Чи лайăх тапăнакан" – Никита Яндушкин (Юнкă), "Чи лайăх бомбардир" – Сергей Кудряшов (Юнкă).

Турнир пĕтĕмлетĕвĕпе Юнкă шкулĕнче вĕренекенсем (тренерĕ В. Михайлов) мала тухнă, хыççăнхи вырăнсене Ярапайкассинчи (А. Люцев) тата Шетмĕпуçĕнчи (В. Степанов) шкул командисем йышăннă.

Ачасемпе çамрăксен В. Егорова ячĕллĕ ятарлă спорт шкулĕн Муркашри уйрăмĕн воспитанникĕсем кӳршĕри Горномарийски районĕнчи ăмăртăва хастар хутшăннă. Октябрĕн 11-мĕшĕнче вĕсем В. Киселев тренерпа пĕрле çăмăл атлетика енĕпе иртнĕ уçă чупăва та çитсе килчĕç.

– Тăвата ачапа кăна çитсе килме май пулчĕ пулин те, ăнăçлă кăтартусемпе таврăнтăмăр. Анна Милютина, кăçалтанпа Олимп резервĕсен училищинче вĕренет, хăйĕн ӳсĕмĕнче çĕнтерӳçĕ пулчĕ, тантăш арçын ачасенчен те ирттерчĕ. Муркаш шкулĕнче вĕренекен Анжела Федорова 1-мĕш вырăн йышăнчĕ, Екатерина Старцевăпа Юлия Лазарева 2-мĕш вырăнсене тивĕçрĕç. Çак хĕр ачасемпе шкулта Владимир Моисеев тата Сергей Паладьев физкультура учителĕсем тимлеççĕ, – каласа пачĕ В. Киселев тренер.

Çамрăксен тăрăшулăхĕпе ӳсĕмĕсене кура пирĕн те спортпа туслă пулма тăрăшасчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Районти çĕр ĕçченĕсемпе ял хуçалăх продукцине тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансен уявĕнчен

# Чыс та мухтав ырми-канми вăй хуракана



**А. Афанасьева хресчен (фермер) хуçалăхĕн управляющийĕ Александр Афанасьев, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн тĕп бухгалтерĕ Алина Федорова тата Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн тĕп агрономĕ Федор Егоров Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивĕçрĕç.**

Ял хуçалăх ĕçченĕшĕн кирек епле тапхăр та ответлă, çур аки пĕтерсен кĕрхи ĕç пирки шухăшламалла, унпа танах хĕле хатĕрленмелле. Халĕ вара шăпах çак вăхăт ĕнтĕ: выльăх-чĕрлĕх йышне сыхласа хăвармалла тата ỹстермелле, кондициллĕ вăрлăх ытларах хатĕрлемелле тата ытти те.

Енчен те пирĕн ĕçе хăнасем пысăка хурса хаклаççĕ пулсан – кăмăл çĕкленет. Районти çĕр ĕçченĕсемпе ял хуçалăх продукцине тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансене саламлакан йышлă пулчĕ.

– Муркашсем ỹсĕмлĕ ĕçлесе пыни чылай ĕç-хĕлтен курăнать. Сире республика шайĕнче те тĕслĕхе илеççĕ, эсир татах та ỹсĕмлĕрех тимлессе шанаççĕ, – терĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Владимир Мидуков.



**Йỹçкасси ял тăрăхĕнчи Анатри Панкли ялĕнчи Мальвинăпа Виталий Башкировсем кăçалхи тухăçпа кăмăллă.**

**Шел пулин те, пысăк пĕлтерĕшлĕ уяв йăлана кĕнĕ пек иртме пултараймарĕ ку хутĕнче. Çанталăкăн кĕтмен çĕртен килсе çапнă чăрсăр пулăмĕ кăмăла самай хуçрĕ. Ял хуçалăх ĕçне вăхăтра тума пултарнипе сăн-питре ăшă кулă вылятакан çынсене курсан вара уяв сĕмĕ туллин палăрчĕ, вăл тивĕçлĕ шайра иртрĕ. Тепĕр тесен ăна валли сăлтавĕ те пысăк вĕт, çак кун ĕç паттăрĕсем пĕрле пухăнчĕç.**

Уяв программи районти ветерансен тĕл пулăвĕнчен пуçланчĕ. Чи малтанах вĕсем "Сывлăх" ФСК ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев район аталанăвне тишкерчĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕпе ытларах ĕçлемеллине палăртрĕ вăл.

– Хисеплĕ ветерансем, эпир сире тăнăç пурнăçшăн, район экономикин аталанăвĕшĕн тав тăватпăр. Эпир сире сума сăватпăр, нумай çула çирĕп сывлăх сунатпăр. Муркаш районĕнчи ял хуçалăх предприятийĕсем кăçалхи тăхăр уйăхра 357 миллиона яхăн тенкĕлĕх продукци туса кăларма пултарчĕç. Çакă иртнĕ сулхинчен самай пысăк. Сирĕн ырă ĕçĕрсене эпир малалла аталантарма, сиртен тĕслĕх илме тăрăшатпăр, – терĕ Ростислав Николаевич тав туса саламланă май.

Пурнăç вара пĕр вырăнта тăмасть, аталану, чăннипех те, куç умĕнче. Хисеплĕ ветерансем те районта пулса иртекен ырă улшăнăва асăрхамасăр хăвармарĕç. Ĕç тухăçлăхĕ пулсан вара кирек епле çанталăкра та канма аван.

Чыс та мухтав çĕр ĕçченне, ял хуçалăхĕнче тимлекене! Уяв район администрацийĕн çуртне куçрĕ. Ĕçлеме тата канма, савăнма пĕлекен йышлă пухăннă.

– Муркаш районĕн тăрăшуллă йышĕ епле ĕçленине хаклатăп та савăнатăп. Эсир кăçал кĕр аки тăвассипе ырă тĕслĕх кăтартма пултартăр, ытти ĕç те сирĕн кăтартуллă, – терĕ Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕ Николай Якимов Чăваш Ен Пуçлăхĕ тата асăннă министерство ячĕсемпе хĕрỹллĕн саламланă май.

Çавăн пекех Николай Петрович республика шайĕнче кăçал ял хуçалăх продукцине ытларах туса илме пултарнине палăртрĕ. Пирĕн районта та ку енĕпе тухăçлă тимленине ĕç кăтартăвĕсем çирĕплетеççĕ. Уйрăмах Суворов яч. хис., Е. Андреев яч. хис., Ильич яч. хис. хуçалăхсем ăнăçлă вăй хунă.



**Черетлĕ уявра "Ударник" хуçалăх ĕçченĕсем чыслав сцени çине йышлăн тухрĕç, акă вĕсем: Александр Анисимов водитель, 2 № фермăра вăй хуракан Валентина Егорова, Николай Иванов механизатор, Николай Максимов тракторист.**



**Вĕсем ял хуçалăхне аталантарассишĕн сахал мар вăй хунă.**

Чи кăмăллă самант – чыслав. Çăкăр ỹстерекен çынна яланах хисеплеççĕ, мĕншĕн тесен вăл – пуринчен асли. Çакна тĕпе хурса район администрацийĕ çулленех ял хуçалăх ĕçченĕсем хушшинче ятарлă ăмăрту ирттерет. Çакăн пек тимлĕх, паллах, малашне тухăçлăрах ĕçлеме ытларах та хавхалантармалла. Уяв сцени çине кашни номинаци çĕнтерỹçи тухрĕ. "2014 – чи лайăх экипаж" номинаци çĕнтерỹçи Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Болеслав Никитин экипажĕ пулчĕ. "2014 – чи лайăх водитель" номинацире Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăй хуракан Виталий Петров – пĕрремĕш вырăнта. "2014 – чи лайăх тракторист" номинацире "Путь Ильича" агрофирма трактористчĕ Виталий Иванов çĕнтерчĕ. "2014 – чи лайăх уй-хир бригади" номинацире "Герой" хуçалăхри Вера Малеева ертсе пыракан бригада – чи пултарулли. "2014 – чи лайăх механизаци бригади" номинацире "Свобода" хуçалăхри Герман Алжиров ертсе пыракан бригада пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Тĕрлĕ шайри Хисеп грамотипе Тав çырăвне тивĕçекен çак кун йышлă пулчĕ.

Çапла ĕнтĕ уяв парнепе, ырă сăмахпа, хăна-вĕрлепе, юрă-кĕвĕпе тата тутлă ĕçмеçимепе хăтлă. Çаксем йăлтах пулчĕç асăннă кун, кичемлĕх валли пачах та вырăн çукчĕ уявра. Муркашра Мăн Сĕнтĕр райповĕсем, хушма хуçалăх тытакансем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем тĕрлĕ продукци сĕнчĕç, тутлă ĕçме-çимепе сăйларĕç. Çапла вара кашнине уяв тулли кăмăл парнелерĕ.

Шкул ачисен пултарулăхĕн куравĕпе методика пỹлĕмĕнче паллашма май килчĕ. Пĕри тепринчен маттур, мĕн кăна çук пулĕ кунта?! Ял тăрăхĕсен палаткисене те питĕ хăтлă илĕркелеНĕ. Вĕсем пурте активлăхпа палăрчĕç. Кашни ялапала вара "ылтăн кĕркунне" пуянлăхĕ курăнать. "Аста аллинче ĕç вылять" теççĕ халăхра, вĕренмелли, пĕлмелли чылай пулчĕ кунта.

Çапла вара асăннă уяв кĕреки хамăр патри экологи тĕлĕшĕнчи пахалăхлă продукципе хăтлă пулчĕ, апла пулсан аякран кỹрсе килнине мар, хамăрăннех хаклама вĕренер, хамăр продукцие çул пама пĕлер.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Автор сăн ỹкерчĕкĕсем.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 9-10.




СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ ТРИКОЛОР.
ТЕЛЕКАРТА - от 3000 руб. ОБМЕН. ГАРАНТИЯ.
Тел.: 8-905-345-77-19. 4-10.

9-10. компания немецкие ОКНА И ДВЕРИ
• замер • доставка (бесплатно)
• установка под ключ
всего от 2900 руб. кв.м.
8(927)844-78-11

Продаю земельный участок на республиканской трассе в д. Нискасы площадью 18 соток для строительства зданий и сооружений. Тел.: 446-448.

Требуются рабочие строительных специальностей: маляры, штукатуры, каменщики, гипсокартонщики, разнорабочие. Работа в Москве и МО.
Тел.: 8-909-151-90-92. Юрий. 7-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 8-27.

ПРОДАЕМ ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ: 25х100; 25х110; 25х120; 25х130; 25х150; 25х200; 50х120; 50х150; 50х180; 50х200. БРУСЬЯ: 100х100; 100х150; 100х200; 150х150; 150х200. БЛОКИ, КИРПИЧИ, ЦЕМЕНТ.
Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 2-10.

Кивелнĕ электропроводка – пушар хăрушлăхĕ, кайран вара чавса çывăх та çыртма çук. Ялти çуртсенче, хваттерсенче кивелнĕ электропроводкăна, счетчиксене çĕнĕрен улăштаратпăр. Материалĕ хаклă мар.
Тел.: 8-902-661-70-57, 8-937-015-35-40, 62-1-37.10-10.

* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Данилов Александр Иванович, проживающий по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, М. Каршлыхи Моргаушского района, ул. Центральная, д. 4.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

### Постановление главы Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

15.10.2014 г. № 3

**О проведении публичных слушаний по проекту муниципального правового акта "Об изменении разрешенного использования земельного участка"**

В соответствии со ст. 28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003 г. №131-ФЗ "Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации", ст.14 Устава Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики п о с т а н о в л я ю :

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта "Об изменении разрешенного использования земельного участка" 29 октября 2014 года в здании администрации Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по адресу: ЧР, Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Советская, д. 16, начало в 15.00 часов. (Проект прилагается).

2. Опубликовать настоящее постановление в газете "Çĕнтерӳ ялавĕ" и разместить на официальном сайте Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

**Глава Большесундырского сельского поселения**
**А.В. ЛАПТЕВ.**

**Проект муниципального правового акта**

Об изменении разрешенного использования земельного участка

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ "О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации", с учетом результатов публичных слушаний, п о с т а н о в л я е т :

1. Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:061201:174, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Малые Татаркасы, ул. Центральная, д. 42 "а", общей площадью 2999 кв.м., с "для строительства хозяйственных построек" на "для ведения личного подсобного хозяйства".

2. С предложениями по проекту муниципального правового акта "Об изменении разрешенного использования земельного участка" обращаться в администрацию Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8.00 до 17.00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 29 октября 2014 года до 9.00 часов.

* * *

Бурение колодцев, канализаций. Колодезные кольца. Доставка. Установка. Тел.: 8-966-249-96-96. 4-5.

* * *

Продаю дрова березовые с доставкой. 1м$^3$ – 1200 руб. Тел.: 8-908-848-55-74. 3-3.

* * *

Организация реализует: гравмассу (ОПГС), щебень различных фракций. Без посредников. Низкие цены. Шешкарская пристань, Моргаушский район. Тел.: 8-927-995-07-51, 8-937-384-06-50. 25-28.

* * *

СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, банные печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-965-68-111-55, 8-937-01-04-222. 4-10.

* * *

Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатпăр.
Тел.: 8-987-665-02-13. 4-10.

* * *

Ултă уйăхри хура-шурă тĕслĕ тынашки усрама сутатпăр. Тел.: 8-965-686-27-23.

* * *

Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. Парковая, 2 этаж в трехэтажном доме, солнечная сторона, индивидуальное отопление.
Тел.: 8-906-131-36-39.

* * *

Февраль уйăхĕнче виççĕмĕш пăруламалли шурăхура ĕне сутатăп. Тел.: 8-967-795-08-69.

* * *

Автомагазин «За рулем» предлагает: шины зимние, диски штамп., аккумуляторы, обогреватели сидений 12V, подогреватели двигателя 220V на все виды машин с установкой, незамерзайка по цене 75 руб. Адрес: с. Моргауши, территория «Агропромснаба». Тел.: 8-927-859-45-93. 1-5.

* * *

Продается однокомнатная квартира в с. Моргауши по ул. Чапаева, д. 59 с индивидуальным отоплением, площадью 38 кв. м., имеется балкон.
Тел.: 8-927-851-00-31, 8-917-679-53-03.

* * *

Сумалли качака сутатпăр. Тел.: 8-903-063-46-69.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ любой сложности. Фотопечать, двухуровневые. Тел.: 381-182. 2-10.

ПРИГЛАСИТЕЛЬНЫЙ БИЛЕТ
ПРЕДЪЯВИТЕЛЮ БИЛЕТА с 10.00 до 13.00 ч. – СКИДКА 5 %
САНКТ-ПЕТЕРБУРГ ПРЕДСТАВЛЯЕТ:
**24 ОКТЯБРЯ**
с 10.00 до 17.00 час.

Уважаемые жители!
В вашем селе будет проходить мероприятие по реализации верхней одежды из кожи и фирменной обуви коллекции ЗИМА 2013-2014 и ЛЕТО-ОСЕНЬ 2014 со скидками от -50% до -70%.
Данная акция проводится в связи с поступлением новой осенней коллекции в различные известные магазины Санкт-Петербурга и Ленинградской области

**ТОТАЛЬНАЯ РАСПРОДАЖА**
КОЖАНЫЕ КУРТКИ•ДУБЛЕНКИ•ОБУВЬ
КОЛИЧЕСТВО РАЗМЕРОВ ОГРАНИЧЕНО

| | | |
|---|---|---|
| Дубленка женская “Converse” современный дизайн, на мутоне, капюшон, модель 2015 г., облегченная, пр-во: Германия ~~25700~~ 11900 | Куртка женская “Rui” модель свингер, подкладка - вельвет, замшевые вставки, пр-во: Польша ~~14200~~ 5900 | Куртка мужская “Shark Word Ship” удлиненная модель, под пиджак, мех - овчина, телячья кожа, пр-во: Германия ~~21800~~ 5900 |
| Куртка женская “Max Mara” дизайнерская модель, двухуровневая молния, с капюшоном, пр-во: Италия ~~14200~~ 5900 | Обувь мужская “Salamander” свиная кожа, подошва прошитая на вулканизации, пр-во: Германия ~~4200~~ 1500 | Обувь женская “Fafala”, телячья кожа, подошва антистресс, подклад - текстиль, пр-во: Финляндия ~~3250~~ 1500 |

Будет представлено 57 наименований верхней одежды и обуви, + большие размеры курток для мужчин и женщин
Красная Площадь, д. 5, РДК

Ултă уйăхри хура-шурă, 3 уйăхри хĕрлĕ мăкла тынашкисем сутатпăр.
Тел.: 8-967-795-51-55, 8-961-343-80-15.

* * *

Продается трехкомнатная квартира в д. Москакасы. Тел.: 8-927-668-96-78.

* * *

Март уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатпăр. Катăкуй ялĕ.
Тел.: 8-906-381-48-32.

* * *

Качака такипе качакасем сутатăп.
Тел.: 8-919-676-50-36.

* * *

Пĕрре пăранланă ăратлă сĕтлĕ качака сутатпăр.
Тел.: 8-905-341-62-39.

* * *

СХПК «Герой» требуется главный бухгалтер, опыт работы не менее трех лет.
Тел.: 67-5-48, 8-937-377-42-93.

* * *

Продается корова черно-белой масти.
Тел.: 8-919-665-15-86, 8-987-736-24-35. 1-2.

* * *

Январь пуçламăшĕнче пăруламалли хура тынашки сутатпăр. Тел.: 8-960-305-17-43.

* * *

Продаю сукозных молодых козочек.
Тел.: 8-927-863-19-31.

Çатраккасси ял тăрăхĕнчи Çатраккасси ялĕнчи Оксана Аркадьевнăпа Владимир Леонидович Шапошниковсен юратнă хĕрĕ
**ЕЛЕНА**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки ашшĕ-амăшĕ, çывăх тăванĕсем, хурăнташĕсемпе пускилĕсем вĕсемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтереççĕ.

Оринин ял тăрăхĕн администрацийĕ кунта ВУС инспекторĕнче ĕçлекен Е.П. Колбасовăн шăллĕ
**Вячеслав Порфирьевич ВЯЗОВ**
вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

СПСК «Агронефтепродукт» выражает глубокое соболезнование директору Большесундырской СОШ Спиридонову К.Д. в связи со смертью брата
**ГРИГОРИЯ.**

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул коллективĕ кунти директорăн К.Д. Спиридоновăн пиччĕшĕ, шкулта хуралçăра ĕçленĕ
**Григорий Дмитриевич СПИРИДОНОВ**
вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Прогноз погоды

| | среда 22 октября | | | | четверг 23 октября | | | | пятница 24 октября | | | | суббота 25 октября | | | | воскресенье 26 октября | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 03 | 09 | 15 |
| Облачность, % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки, мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура, °С | -2 | -6 | -6 | -8 | -9 | -8 | -6 | -8 | -7 | -6 | -6 | -8 | -9 | -8 | -7 | -11 | -13 | -12 | -9 |
| Давление, мм | 728 | 733 | 736 | 740 | 743 | 745 | 747 | 749 | 751 | 754 | 755 | 756 | 758 | 759 | 760 | 761 | 763 | 765 | 764 |
| Влажность, % | 96 | 84 | 81 | 81 | 82 | 80 | 83 | 82 | 88 | 84 | 84 | 85 | 86 | 84 | 76 | 86 | 86 | 83 | 79 |
| Ветер, м/с | 3 | 7 | 6 | 6 | 7 | 7 | 6 | 5 | 6 | 5 | 4 | 3 | 4 | 3 | 4 | 2 | 3 | 2 | 2 |
| | С | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С | С | С | С | С | С | С | С | С-З | С-В |
| Солнце восход / заход | | 07:39 | 17:35 | | | 07:41 | 17:32 | | | 07:43 | 17:30 | | | 07:45 | 17:28 | | 06:47 | 16:25 | |
| Луна восход / заход | | 05:39 | 17:02 | | | 06:49 | 17:23 | | | 08:00 | 17:47 | | | 09:12 | 18:17 | | 09:22 | 17:52 | |

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.
Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 21.10.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4819.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.